Темиçе çул каялла пичетре танлаштарулла хакёсем пирён республикăра чи йӳннисеммччё. Анчах пурнăç улшăнса пырать: халё акă Ульяновск облаçёнче чи пёчёк хаксем. Ку, паллах, пурне те кăсăклантарать.

Ульяновск облаçёнчи уйрăмлăхсене хăш-пёр экономистсем «тапаланакан социализм» тесе хаклаççё (кунта кăштах тёрёслёх те пур). Темле ятпа асăнсан та, çакă паллă: Чулхулапа танлаштарсан, унта пурнăç икё хут йӳнёрех, пирён республикăпа танлаштарсан та çав майлах. Облаçре тёп апат-çимёç хакёсене талон системипе йёркелесе тăраççё. Çак йёркеле кашни çын çирёплетнё талонсемпе уйăхне кило çурă сысна е шултра вылăх ашё (килограмне 350 тенкёпе), 2 килограмм сахăр тата 300 грамм канфет (виççёршер тенкёпе), 400 грамм ӳсен-тăран çăвё (1 килограмё 200 тенкё) тата çавăн чухлех вылăх çăвё (килограмё 350 тенкё), 15 çăмарта (теçетки 100 тенкё) туянма пултарать. Паллах, хăйсем ёрёхсе кайнă вăхăтра сахалрах пулсан та, кулленхи пурнăçра тёрек паратех. Анчах ку пулăм Раççей рынок хутшăнăвёсене куçса пынă тапхăрта «киревсёр» шутланать, çавăнпа та Б. Ельцин Ульяновскра пулнă чух асăннă талон системине усă курнăшăн вырăнти губернатора Ю. Горячева ёçрен хăтарасшăн пулнă, анчах халăх хăйён ертӳсине çине тăрса хӳтёленё пирки ним те тăвайман.

Кăсăклă: пирён пускилсем хăксене «тилхепере» тытса пурăнма ăçтан вăй çитереççё-ши?

Малтанах калас пулать, унта вырăнти влаçсем çёнетӳ пуçланиччен пулнă управлени тытăмне сыхласа хăварнă. Çав управлени пурлăха центртан валеçмелли йăлана пăрахăçламасăр туса пырать. Çеваннăн пек тума вырăнти налуксене пётёмпех область бюджетне хыççё. Экономикăпа социаллă пурнăçа йёркелесе пыма вырăнти предприятисем туса кăларакан мёнпур таварсен хакне 10 процент пысăклатса сутаççё. Таварсен хакёнчен Кунта облаçре кăларакан «УАЗ» автомобиль пысăк пёлтерёшлине асăнмасăр хăварма çук, мёншён тесен пётём Раççей халăхё çав машинăсемпе усă курать. Çав вăхăтрах область ертӳçисем Раççейён пётёмёшле бюджетне сахалрах укçа куçарса хăйсене валли ытларах дотаци илме ăс çитереççё.

Чăннипе вара пирён республикăра та ёçсене ульяновскисем майлă йёркелесе халăх пурнăçне çăмăллатма майсем пур. Республикăри производство хăвачёсем çавна тума çителёклё, анчах вёсем халăха кирлё таварсене ытла та сахал кăлараççё. Пётём Раççей халăх хуçалăхё пекех, пирён республика халăх хуçалăхё, производствăна рынне пуханать.

Кунта облаçре кăларакан «УАЗ» автомобиль пысăк пёлтерёшлине асăнмасăр хăварма çук, мёншён тесен пётём Раççей халăхё çав машинăсемпе усă курать. Çав вăхăтрах область ертӳçисем Раççейён пётёмёшле бюджетне сахалрах укçа куçарса хăйсене валли ытларах дотаци илме ăс çитереççё.

Чăннипе вара пирён республикăра та ёçсене ульяновскисем майлă йёркелесе халăх пурнăçне çăмăллатма майсем пур. Республикăри производство хăвачёсем çавна тума çителёклё, анчах вёсем халăха кирлё таварсене ытла та сахал кăлараççё. Пётём Раççей халăх хуçалăхё пекех, пирён республика халăх хуçалăхё, производствăна рынне пуханать.

Кунта облаçре кăларакан «УАЗ» автомобиль пысăк пёлтерёшлине асăнмасăр хăварма çук, мёншён тесен пётём